15-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1942
АВГУСТ
15
ШАМАТКУН
190 (6125) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана ытлашшипех тултарар

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ 1942 ҫулта выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе ятарласа постановлени йышӑннӑранпа чылай вӑхӑт иртрӗ. Ҫак постановление пурнӑҫа кӗртессишӗн пирӗн колхозлӑ хресченсем тимлӗн кӗрешсе пыма тытӑнчӗҫ. Пирӗн ҫӗршыври халӑх хуҫалӑхӗн ытти отраслӗсенчи работниксем пекех, колхозниксемпе колхозницӑсем выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва тухрӗҫ, хӑйсем ҫине пысӑк обязательствӑсем илсе, вӗсене хӗрӳллӗ ӗҫпе пурнӑҫа кӗртсе пычӗҫ.

Социализмлӑ ӑмӑрту лайӑх результатсем пачӗ. Пирӗн республикӑри хӑшпӗр районсем те ӑмӑртура чылаях пысӑк ӳсӗмсем тума пултарчӗҫ. СССР Наркомземӗпе унӑн политуправленийӗ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе малалла вӑйлатассишӗн пынӑ Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн малтанхи итогӗсене пӑхса тухнӑ. Вӗсем СССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне илме кандидата 96 района палӑртнӑ. Ҫав районсем хушшинче пирӗн республикӑри Ҫӗрпӳ, Октябрьски, Элӗк тата Сӗнтӗр районӗсем те пур.

Анчах пирӗн пӗтӗм республика выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе ҫителӗксӗр ӗҫлерӗ. Ҫавӑнпа та, кӑҫалхи малтанхи ҫурҫулӑн итогӗсене пӑхса тухнӑ чухне, пирӗн республика выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне илме палӑртнӑ кандидатсен шутне кӗреймерӗ. Ҫакӑнтан ӗнтӗ пирӗн тивӗҫлӗ выводсем тӑвас пулать, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе тӗпренех вӑйлатас пулать.

Выльӑхсен йышне ӳстерес тӗлӗшпе тунӑ ӗҫсен итогӗсем мӗн ҫинчен калаҫҫӗ-ха, республикӑри районсем ҫак енӗпе мӗнле ӗҫлерӗҫ? Ҫак ыйту ҫине ЧАССР Наркомземӗн даннӑйӗсем уҫӑмлӑ ответ параҫҫӗ.

Пирӗн кӑҫалхи ҫул вӗҫленнӗ тӗле мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсен хисепне 80 пин пуҫа ҫитермелле. Августӑн 1-мӗш тӗлне республикӑра вӗсем 68.361 пуҫ пулнӑ. Ҫакӑ вӑл планпа палӑртнин 85,5 процентне пулать. 1942 ҫулти январӗн 1-мӗш тӗлне пулнӑ хисеппе танлаштарсан, мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсен йышӗ республикӑра 20 процент чухлӗ ӳссе 120 процента ҫитнӗ. Кӑҫалхи январӗн 1-мӗш тӗлне пулнӑ хисеппе танлаштарсан, сыснасен йышӗ 42 процент чухлӗ ӳссе 142 процента ҫитнӗ; сурӑхсен йышӗ 27 процент чухлӗ ӳссе 127 процента ҫитнӗ. Ҫапла вара выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе кӑҫалхи 7 уйӑх хушшинче пирӗн республика хӑшпӗр ӳсӗмсем тунӑ. Анчах ҫак ӳсӗм хальхи вӑхӑтра пачах та ҫителӗксӗр, мӗншӗн тесен государство планне тултарас енӗпе пирӗн нумай ӗҫлемелле-ха, мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсен йышне татах 15 процент чухлӗ, сурӑхсен йышне 28 процент чухлӗ ӳстермелле.

Районсем тӑрӑх та эпир ҫав картинӑнах куратпӑр. Тӗслӗхрен малта пыракан районсене илсе пӑхма пулать. Элӗк районӗ кӑҫалхи январӗн 1-мӗш тӗлне пулнӑ хисеппе танлаштарсан мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсен йышне 7 уйӑх хушшинче 24 процент чухлӗ, сыснасен хисепне 52,8 процент чухлӗ, сурӑхсен йышне 30 процент чухлӗ ӳстернӗ. Анчах государство панӑ ҫулталӑкри плана мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсем енӗпе 89,6 процент, сурӑхсем енӗпе 82,7 процент кӑна тултарнӑ.

Ҫӗрпӳ, Октябрьски, Сӗнтӗр районӗсенче те картина ҫавӑн пекех. Апла пулсан, малта пыракан районсен те ҫитӗнӳсемпе лӑпланса ларма нимӗнле сӑлтав та ҫук, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе вӗсен те ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлемелле.

Анчах вӗсем юлашки вӑхӑтра ҫак ӗҫе чылай вӑйсӑрлатрӗҫ темелле. Вӑл районсенчи руководительсен ӳсӗмсем пирки кӑштах пуҫӗсем ҫаврӑнса илчӗҫ пулмалла. Сӑмахран, мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсен хисепне июль уйӑхӗнче Элӗк районӗ 0,1 процент чухлӗ ҫеҫ ӳстернӗ, Октябрьски районра вара 1 процент чакнӑ. Сыснасен йышӗ июль уйӑхӗнче Элӗк районӗнче 5,7 процент, Октябрьски районра 2 процент чухлӗ чакнӑ. Ҫак даннӑйсем кӑтартса панӑ тӑрӑх, ӳлте асӑннӑ малта пыракан районсенче ӳсӗмсемпе лӑпланса ларас сиенлӗ йӑла пурри палӑрать. Ахальтен мар ӗнтӗ вӑл районсене июль уйӑхӗнче Ишлей, Ҫӗмӗрле, Советски, Вӑрнар, Калинински районсем хӑваласа ҫитсе иртсе кайма тытӑнчӗҫ. Пирӗн хамӑрӑн ҫитӗнӳсемпе лӑпланса лармалла мар, кашни кун ытларах та ытларах ӳсӗмсем туса пымалла.

Кунта юлса пыракан районсем ҫинчен уйрӑмӑнах чарӑнса тӑмалла. Вӗсен шутне Первомайски, Йӗпреҫ, Кувакино тата ытти районсем кӗреҫҫӗ. Сӑмахран, Первомайски район выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе кӑҫалхи 7 уйӑх хушшинче питех те начар ӗҫлерӗ. Вӑл районра мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсен хисепӗ кӑҫал пӗтӗмпе те 3 процент кӑна ӳснӗ, район ӗнесем ӗрчетмелли ҫулталӑкри плана 73 процент, сурӑхсем ӗрчетмелли плана 57 процент кӑна тултарнӑ. Ҫавӑн пекех тӑрать ӗҫ Йӗпреҫпе Кувакино районӗсенче те. Чӑн та, ку районсем юлашки вӑхӑтра выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе кӑштах лайӑхлатрӗҫ темелле, анчах плана тултарас тесен вӗсен нумай вӑй хурса ӗҫлемелле. Ку районсенчи совет тата парти организацисен выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе хӑйсен ӗҫне тӗпренех ҫӗнетмелле.

Выльӑхсен йышне ӳстерсе плана тултарас тесен, ҫамрӑк выльӑхсене контрактацилес тӗлӗшпе районсене панӑ заданисене ҫак кунсенчех пурнӑҫа кӗртни кирлӗ. Анчах ҫак ӗҫ халӗ тивӗҫлипе пулса пырать теме ҫук-ха. Хӑшпӗр районсем контрактаци планне те тултарман. Контрактациленӗ выльӑхсене фермӑсене усрама илесси те вӑраххӑн пулса пырать. Ку вӑл—пысӑк ҫитменлӗх, ӑна халех сирме тӑрӑшас пулать.

Выльӑх-чӗрлӗх витисене хӗл валли хатӗрлесси халӗ чи кирлӗ ӗҫсенчен пӗри пулса тӑрать. Выльӑхсем валли ҫителӗклӗ чухлӗ ӑшӑ витесем хатӗрлесен ҫеҫ эпир малашне выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре ҫитӗнӳсем тума пултаратпӑр. Ҫак задачӑна халӗ чылай районсем ҫителӗксӗр пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ. Сӗнтӗрвӑрри районӗн 757 сысна валли вите ҫӗнӗрен тумалла е юсамалла пулнӑ, 45 пуҫ валли ҫеҫ хатӗрленӗ; 1.089 сурӑх валли вите хатӗрлес вырӑнне 175 сурӑх валли ҫеҫ хатӗрленӗ. Октябрьски районра ӗнесем валли 29 вите ҫӗнӗрен тумалла пулнӑ, халӗ 12 вите ҫеҫ туса лартнӑ. Паллах, ҫак районсен хӗле хатӗрленес ӗҫе вӑйлатас пулать.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре пысӑкрах ҫитӗнӳсем тума пирӗн пур майсем те пур. Пӗтӗм Союзри ӑмӑртура республикӑна мала кӑларас тесе кашни колхоз, кашни бригада, кашни ферма ӑмӑртса ӗҫлесен, эпир хамӑр умра тӑракан задачӑсене чыслӑн пурнӑҫлама пултаратпӑр.

Государствӑна тырӑ парас ӗҫе чыслӑн пурнӑҫлассишӗн

Государствӑна обязательнӑй йӗркепе тырӑ парас ӗҫ халӗ хӗрӳллӗн пулса пымалла. Августӑн 10-мӗш тӗлне республикӑри колхозсем государствӑна 1942 ҫулти обязательство шучӗпе 4082 тонна, МТС ӗҫӗшӗн тивекен натуроплата шучӗпе 207 тонна, оборона фондне хывма 30 тонна тырӑ панӑ. Нумай колхозсем государствӑна тырӑ памалли обязательствӑна пысӑк ҫӗкленӳпе, хӑвӑрт пурнӑҫлама тытӑнчӗҫ. Тырӑсене вырса пынӑ май кӗлтисене итемсем ҫине кӗртеҫҫӗ, авӑн ҫапаҫҫӗ, государствӑна ҫӗнӗ тырӑ параҫҫӗ.

Ҫӗнӗ тырра ҫийӗнчех ҫапса государствӑна парас ӗҫ Калинински, Канаш, Шӑхасан тата ытти районсенчи колхозсенче лайӑх пулса пырать. Калинински район августӑн 10-мӗш тӗлне государствӑна обязательство шучӗпе 390 тонна, МТС ӗҫӗшӗн тивекен натуроплата шучӗпе 34 тонна тырӑ панӑ. Ҫавӑн пекех Советски, Канаш, Шӑхасан, Сӗнтӗр, Ишлей, Етӗрне районӗсем те августӑн 10-мӗш тӗлне государствӑна 250—300-шер тонна тӗштырӑ леҫсе панӑ. Красноармейски район обязательство шучӗпе 217 тонна, натуроплата шучӗпе 29 тонна тырӑ панӑ. Ку районсенче вунӑшар колхозсем 1942 ҫулти тырӑ обязательствисене ҫӗнӗ тырра парса татса пыраҫҫӗ. Государствӑна тырӑ леҫме организациленӗ транспорт бригадисем хӑйсен ӗҫне пысӑк ҫӗкленӳпе тума тытӑннӑ, вӗсем государствӑна тырӑ леҫес ӗҫе срокчен пурнӑҫлассишӗн ӑмӑртӑва хутшӑннӑ.

Государствӑна тырӑ парас ӗҫ—колхозсен чыслӑ тивӗҫӗ. Государство умӗнчи обязательствӑна срокчен, чыслӑн пурнӑҫлани нимӗҫ оккупанчӗсене хирӗҫ пыракан ҫапӑҫура тӑван ҫӗршывпа Хӗрлӗ Ҫара пысӑк пулӑшу пани пулать. Ҫакна республикӑн хӑшпӗр районӗсенчи руководительсем ӑнланса ҫитнӗ теме ҫук-ха. Кувакино районӗ августӑн 10-мӗш тӗлне государствӑна 1942 ҫулти обязательство шучӗпе мӗнпурӗ те 6 тонна ҫеҫ тырӑ панӑ. Ҫавӑн пекех Шӑмӑршӑ, Первомайски, Пӑрачкав, Ҫӗмӗрле, Сӗнтӗрвӑрри районӗсенче те государствӑна тырӑ парас ӗҫ организованно пулса пымасть-ха. Куславкка районӗнчи чылай колхозсем государствӑна тырӑ пама юлашки кунсенче ҫеҫ тытӑннӑ. Ку районсенчи колхозсен тырӑ обязательствине парса татас ӗҫре уйрӑмах пысӑк тимлӗхпе ӗҫлемелле.

Августӑн 10-мӗшӗнчен пуҫласа республика государствӑна ҫӗнӗ тырӑ парас ӗҫе график тӑрӑх туса пыма тивӗҫлӗ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче кирек мӗнле ӗҫре те график вӑл — закон пулса тӑрать. Ҫӗршыва хаяр ҫапӑҫусем пынӑ вӑхӑтра государствӑна тырӑ парас ӗҫӗн графикне кашни район, кашни колхоз ҫирӗппӗн пурнӑҫласа пымалла.

Районсенчи партипе совет организацисен, хатӗрлев организацисен руководителӗсен, колхоз председателӗсен государствӑна тырӑ парас ӗҫе кӑҫал нихӑҫанхинчен те организованно туса ирттерме мобилизацилемелле. Государство умӗнчи тырӑ обязательствине срокчен, чыслӑн пурнӑҫлассишӗн большевикла кӗрешмелле.

Тырӑ турттаракансем! Эсир хисеплӗ те кирлӗ ӗҫ тӑватӑр. Тиенӗ, турттарнӑ тата пушатнӑ чухне тырра ан тӑккалӑр!

Уборкӑри ӗҫсен срокне кӗскететпӗр

Айкӑшри Киров ячӗпе тӑракан колхозри колхозниксемпе колхозницӑсем уборка ӗҫӗсене тивӗҫлипех лайӑх йӗркеленӗ.

Жнейкӑпа темиҫе ҫул ӗҫленӗ опытлӑ машинист Федор Павлов уборкӑна тухиччен колхозӑн 4 жнейкине тата лобогрейкӑна юсаса лартрӗ, вӗсемпе ӗҫлеме 3 ҫынна вӗрентсе хатӗрлерӗ. Халӗ Л. Кадуков, В. Мижиков, Н. Александров юлташсем жнейкӑпа сменӑра 5—6-шар гектар вырса кулленхи ӗҫ нормине 125—150-шар процент тӑрах тултарса пыраҫҫӗ. Павлов машиновед, лашасене улӑштарса пырса, 16-шар сехет хушши ӗҫлесе кулленех 7—8-шар гектар вырать.

Тырра кӗреплеллӗ ҫавасемпе вырни ҫурлапа вырнинчен 2—3 хут тухӑҫлӑрах. Колхозра кашни бригадӑрах 10-шар кӗреплеллӗ ҫава иртен пуҫласа каҫченех ыраш ҫулаҫҫӗ. Ҫавасене Ф. Кротков платник юсасах тӑрать. Ф. Алексеева, А. Иванова, У. Кириллова колхозницӑсем кӗреплеллӗ ҫавасемпе уйра каҫ выртсах тырӑ ҫулаҫҫӗ. Кунне вӗсем 0,40-шер гектар тӑваҫҫӗ.

Уборка вӑхӑтӗнче колхозра 25 ача валли ясли тата колхозниксем валли обществӑллӑ столовӑй организациленӗ. Ясли заведующийӗ А. Шувалова юлташ ачасене пӑхассине аван йӗркеленӗ.

Колхозра агитмассӑллӑ ӗҫе те лайӑх йӗркеленӗ. Ф. Алексеев, Г. Шадров, М. Максимова агитаторсем, ӗҫленӗ вырӑна кайса, кулленех колхозниксене хаҫатсенчен Совет Информаци Бюровӗн пӗлтерӗвӗсене тата уйрӑм эпизодсене вуласа параҫҫӗ, партипе правительство постановленийӗсене вуласа ӑнлантараҫҫӗ. Кашни бригадӑрах уборка пуҫланнӑранпа 2-шер номер стена хаҫачӗ тухнӑ. Кашни кунах боевой листоксем кӑлараҫҫӗ.

Колхоз уборка ӗҫӗсене производствӑллӑ планпа пӑхнӑ пек 16 кунта мар, 15 ӗҫкунӗнче пухса кӗрсе капана хывассишӗн кӗрешет.

Г. МАТВЕЕВ.

КАЛИНИНО.

Кӗлте турттарса капана хывас ӗҫ юлса пырать

ШӐМӐРШӐ, августӑн 12-мӗш. **(Телефонпа).** Тырӑ вырас ӗҫ районра малалла пырать. Чылай колхозсем ыраш вырса пӗтернӗ хыҫҫӑнах ҫурхи тырӑсене суйласа вырма тытӑнчӗҫ. Ӗнерхи куна районри колхозсем пурӗ 5.222 гектар тырӑ вырса ҫӗмеле хывнӑ, вӑл шутран жнейкӑсемпе 2.364 гектар, кӗреплеллӗ ҫавасемпе 675 гектар, алӑпа 2.007 гектар вырнӑ. Малтанхи кунсенчи пекех районри машинно-тракторнӑй станци комбайнсемпе тырӑ вырас ӗҫе кирлӗ пек туса пымасть. Ӗнерхи куна комбайнсемпе пурӗ те 166 гектар ҫеҫ вырса пухнӑ. Вӑл шутран комбайнер Чашкин юлташ 50 гектар, комбайнер Фадеев юлташ хӑйӗн помощникӗпе пӗрле икӗ комбайнпа ӗҫлесе 90 гектар вырнӑ.

Машинно-тракторнӑй станци уборкӑра кая юлса пыни руководительсен ӗҫре ҫаврӑнӑҫулӑх ҫуккинчен килет. Комбайнерсем машинӑра пӗчӗк кӑлтӑк пулнипех кунӗ-кунӗпех ӗҫлемесӗр тӑраҫҫӗ. Ҫапла пулин те ӗҫре кирлӗ улшӑну тӑвасси ҫук-ха. МТС-па юнашар «Труженник» колхозра комбайн тахҫантанпах ӗҫлемесӗр тӑрать. Ҫапах та МТС механикӗсем унта ҫитмен, комбайн ӗҫсӗр тӑнин сӑлтавне пӗлме тӑрӑшман.

Районри чылай колхозсенче кӗлтесене уйран турттарса капансене хывас ӗҫ кая юлса пырать. Августӑн 11-мӗш тӗлне кӗлтесене капана хывма районри 14 колхоз ҫеҫ тытӑннӑ. Вӗсем паянхи куна 276 гектар ҫинчи тырра капана хывнӑ. Вӑл шутран «Победа» колхоз 50 гектар ҫинчи тырра ҫапнӑ, 90 гектар ҫинчи кӗлтене капана хывнӑ.

Ыраш вырас ӗҫе уйрӑмах «Красная Нива», «Светлый путь», Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозсем юлса пыраҫҫӗ. Ку колхозсем паянхи куна та ыраша 50 процента ҫити ҫеҫ вырнӑ.

ВКП(б) Шӑмӑршӑ райкомӗ ҫак кунсенче районра уборка ӗҫӗсем мӗнле пыни ҫинчен сӳтсе яврӗ. Каярах юлса пыракан колхозсенче ӗҫлекен хӑйӗн представителӗсене улӑштарчӗ, ӗҫе конкретно организацилеме хушса ҫӗнӗ представительсем ҫирӗплетрӗ.

Августӑн 10-мӗшӗнче районра кӗракине 14 колхоз тухнӑ.

И. ГРИГОРЬЕВ.

КАЛИНИН ЮЛТАШӐН ҪЫРӐВНЕ СӲТСЕ-ЯВСАН

СӖНТӖР. СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ Михаил Иванович Калинин юлташ ялсовет исполкомӗсен председателӗсем патне 1942 ҫулти тырпулсене пухса кӗртессине организованно туса ирттерме чӗнсе янӑ ҫырупа Сӗнтӗр районӗнчи Ҫатракасси ялсовечӗ колхозниксемпе колхозницӑсене анлӑн паллаштарнӑ. Колхозниксемпе колхозницӑсем, М. И. Калинин юлташӑн ҫырӑвӗ ҫине ответлесе, ӗҫ тухӑҫлӑхне вӑйлӑн ҫӗклерӗҫ. «Малалла» колхозра Осипова, Н. Белова колхозницӑсем талӑкра 0,38 гектар тырӑ вырма пуҫларӗҫ. «Пионер» колхозра та тырӑ вырас ӗҫ вӑйланчӗ. Колхозница Е. Михайлова кулленех 580 кӗлте вырса ӗҫ нормине 224 процент тултарать. Ҫак колхозӑн членӗсем—С. Якимова, А. Андреева тата ыттисем те тырӑ вырнӑ ҫӗрте кулленхи нормӑна 120—132 процент пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем —О. Леонтьева, П. Никифорова колхозницӑсем кулленех 0,19-шар гектар тырӑ выраҫҫӗ.

Колхозниксем хушшинче М. И. Калинин ҫырӑвне ӑнлантарса панӑ хыҫҫӑн вӗсем тырра уйра каҫ выртсах вырма пуҫларӗҫ.

С. НАЛИМОВ.

Обязательствӑна тултарса пырать

ШӐХАСАН. **(Хамӑр корр.).** Комбайнпа тырӑ вырас ӗҫӗн мастерӗ Михаил Тимофеев кӑҫал хӑйӗн комбайнӗпе 300 гектар ҫинчи тырра вырса пухма обязательство илнӗ. Халӗ ӑна вӑл пурнӑҫласа пырать. 2—3 ӗҫкунӗ хушшинче М. Тимофеев юлташ 45 гектар ыраш вырчӗ. Норма тӑрӑх 8-шер гектар вырмалла пулсан, вӑл кулленех 16-шер гектар тырӑ вырать.

Тимофеев юлташӑн комбайнӗ лайӑх ӗҫлет, чарӑнса ӗҫсӗр тӑни пулмасть.

С. ШАДИН.

Пионерсем ӗҫре

ИШЛЕЙ. Кӑшавӑшри туллимар вӑтам шкулта вӗренекен пионерсем ялхуҫалӑхӗнче ӗҫлеме виҫӗ отряда организациленсе тухнӑ. Вӗсене Ф. Хорошилов, А. Пушкина, О. Ефремова, Х. Терентьева учительсем ертсе пыраҫҫӗ. Августӑн 3-мӗшпе 8-мӗш хушшинче 3 отряд пурӗ 15 гектар ҫинчи ыраша вырса пухрӗ. 6 кунра вӗсем 250 ӗҫкунӗ ӗҫлесе илчӗҫ.

Чылай пионерсем пысӑк хастарлӑхпа ӗҫлеҫҫӗ. З. Максимова, П. Андреева пионерсем кунне икшер ӗҫкунӗ ӗҫлесе илеҫҫӗ. Отрядсенче тӑтӑшах боевой листоксем тухса тӑраҫҫӗ.

З. МИТРОФАНОВА.

83.297 тонна силос хывнӑ

Августӑн 10-мӗш тӗлне республика силос хывас плана 69,4 процент пурнӑҫланӑ. Пурӗ 83.297 тонна силос хывнӑ. Ҫӗмӗрле районӗ силос хывас плана 109,7 процент тултарнӑ. Кунта пурӗ 4.062 тонна силос хывнӑ. Комсомольски район силос хывас плана 98,8 процент, Сӗнтӗрвӑрри — 91,4 процент тултарнӑ. Шӑхасан, Шупашкар, Канаш, Вӑрнар, Тӑвай, Пӑрачкав районӗсем силос планне 80 процент ытла пурнӑҫланӑ.

Ҫӗрпӳ районӗ ҫак иртнӗ пилӗк кун хушшинче силос хывас плана 30 процент пурнӑҫа кӗртсе ҫулталӑкри плана 60 процента ҫитернӗ. Ку районри колхозсен выльӑх-чӗрлӗхсем валли сӗтеклӗ апат-ҫимӗҫ хатӗрлес ӗҫе малашне те пысӑк ҫӗкленӳпе туса пымалла. Район выльӑх-чӗрлӗх йышне ӳстерес тӗлӗшпе ҫитӗнӳсем туса СССР Наркомземӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне тата премми илме кандидата тӑма тивӗҫлӗ пулчӗ. Ҫак тивӗҫе малалла та ҫӳлте тытса тӑрас пулсан, паллах, выльӑх-чӗрлӗх валли сӗтеклӗ апат нумай хатӗрлесе хӑвармалла.

Выльӑх-чӗрлӗх валли сӗтеклӗ апат хатӗрлес тӗлӗшпе уйрӑмах Шупашкар хули, Красноармейски (34,3 процент), Элӗк (43,5 процент), Вӑрнар (45,7 процент), Октябрьски (46,0 процент), Сӗнтӗр (49 проц.) районӗсем начар ӗҫлеҫҫӗ.

Кӗҫех кӗркуннехи уйӑхсене кӗретпӗр. Курӑксем симӗсленсе ӳссе пырас вӑхӑт кӗскелсе килет. Ялхуҫалӑхӗнчи ытти ӗҫсене туса пынипе пӗрлех, колхозсен выльӑх-чӗрлӗхсем валли сӗтеклӗ апат-ҫимӗҫ ытларах хатӗрлесе хӑварассишӗн те тӑрӑшмалла. Курӑк пухас ӗҫе пионерсене активлӑн явӑҫтармалла. Кашни сехетпе туллин усӑ курсан, кунта выльӑх-чӗрлӗх фермисенче ӗҫлекен колхозниксем паха ӗҫсем тума пултараҫҫӗ. Кӑҫал кашни колхозӑн планпа пӑхнинчен ытларах силос хатӗрлесе хӑвармалла. Ку пире вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи йывӑр условисенче те колхозсен обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗхӗн йышӗпе унӑн продуктивносне вӑйлӑн ҫӗклеме май парӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Августӑн 13-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Августӑн 13-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем противника хирӗҫ **Клетская** районӗнче, **Котельниковӑран** ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехри вырӑнта, ҫавӑн пекех тата **Минеральные Воды, Черкесск, Майкоп, Краснодар** районӗсенче ҫапӑҫнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Пирӗн карапсем Финн заливӗнче противникӑн подводнӑй лодкине путарнӑ. Баренц тинӗсӗнче противникӑн 3 транспортне путарнӑ, вӗсен водоизмещенийӗ пӗтӗмпе 28.000 тонна.

* * *

Августӑн 12-мӗшӗнче пирӗн авиацин чаҫӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен 60 ҫити танкне, войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 200 ытла автомашинине, 45 лавне, горючи тултарнӑ 5 автоцистернине пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, боеприпассен 8 складне тата горючин 3 складне сирпӗнтерсе янӑ, полевой тата зенитнӑй артиллерин 11 батарейине пусарса лартнӑ, противникӑн пехотине 3 батальона ҫити сапаласа янӑ, пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Клетскаяран кӑнтӑрарах районра пирӗн войскӑсем противникӑн йышлӑрах вӑйӗсене хирӗҫ ҫапӑҫнӑ. Старши лейтенант Милюков командир пулса ертсе пыракан совет боецӗсем тӑшман пехотин батальонне атакӑласа, ӑна сирсе пӑрахнӑ. Нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 150 ҫынна пӗтерсе тӑкнӑ. Трофейӑсем тытса илнӗ. Участоксенчен пӗринче пулеметчик Деркач юлташ хӑйӗн пурнӑҫне хӗрхенмесӗр кӗрешнӗ. Мина ванчӑкӗсемпе унӑн икӗ ури те аманнӑ пулнӑ, анчах вӑл юлашки патрон пӗтиччченех персе тӑнӑ. Ҫав ҫапӑҫура Деркач юлташ 45 нимӗҫе пӗтерсе тӑкнӑ. Кун каҫиччен совет летчикӗсем сывлӑшри ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 7 самолетне персе антарнӑ тата аэродромсем ҫинче 13 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Котельниковӑран ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехри районра пирӗн войскӑсем противника хирӗҫ вӑйлӑн ҫапӑҫнӑ. Халӑх пурӑнакан М. пунктшӑн пынӑ ҫапӑҫура Макарчук юлташ ертсе пыракан пӗрлештернӗ отряд противникӑн пӗр батальона ҫити вӑйпа тунӑ атакине сирсе пӑрахнӑ, унтан вара контратакӑна куҫса, гитлеровецсене каялла хӑваласа янӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшман салтакӗсен 100 вилли ытла выртса юлнӑ. Н-ски чаҫри танкистсем пилӗк кун хушшинчи ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 47 танкне, пехота турттарса пыракан 14 автомашинине, 10 мотоциклне тата гитлеровецсене 300 ҫынна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Краснодар районӗнче пирӗн войскӑсем противникӑн хаяр атакисене сире-сире пӑрахнӑ. Артиллери вучӗпе пыра-пыра тапӑнса нимӗҫсен 70 ҫити танкне, 75 автомашинине тата 2.000 ҫити салтакӗсемпе офицерӗсене пӗтерсе тӑкнӑ. Н-ски чаҫӑн участокӗнче пӗр кун хушшинче 400 ытла гитлеровеца, 5 оруди, 11 миномет тата 9 автомашина пӗтерсе тӑкнӑ. Минометсенчен персе нимӗҫсен шыв урлӑ каҫмалли икӗ вырӑнне ҫӗмӗрнӗ. Тӑшманӑн автомашинисемпе пехотин ушкӑнӗсене, шыв урлӑ каҫма пухса тӑратнӑскерсене, пысӑк сиен кӳнӗ.

Минеральные Воды тата Черкесск районӗсенче пирӗн чаҫсем противникӑн йышлӑрах вӑйӗсене хирӗҫ оборонӑллӑ хӗрӳллӗ ҫапӑҫусем туса пынӑ.

* * *

Воронеж районӗнче пирӗн войскӑсем халӑх пурӑнакан пӗр пункта йышӑнса илнӗ тата нимӗҫсен 75-мӗш пехотнӑй дивизийӗн 222-мӗш полкне ҫапса аркатнӑ. Совет летчикӗсем пӗр кун хушшинче тӑшманӑн пехотине пӗр батальона ҫити, противникӑн 8 танкне, 36 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ, боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ тата артиллерин 5 батарейине, минометсен 4 батарейине пусарса лартнӑ.

* * *

Брянск фрончӗн участокӗсенчен пӗринче пирӗн чаҫсем, танксемпе пӗрле пулса, авиаци тапӑнса тата артиллерирен персе хатӗрленнӗ хыҫҫӑн, тӑшмана атакӑланӑ. Нимӗҫсем хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе, пирӗн подразделенисем юханшыв урлӑ каҫнӑ та халӑх пурӑнакан темиҫе пункта йышӑнса илнӗ. Малалла куҫса пырса, пирӗн танкистсем 50 дзота пӗтерсе тӑкнӑ тата нимӗҫсен юсавлӑ 6 танкне вӗсен экипажӗсемпе пӗрлех тытса илнӗ.

* * *

Ленинград облаҫӗнчи партизансем нимӗҫ оккупанчӗсене хирӗҫ хаяррӑн ҫапӑҫаҫҫӗ. Нимӗҫсен командованийӗ партизансене хирӗҫ мотопехотӑн пысӑк вӑйӗсене тата танксемпе бронемашинӑсем янӑ. Партизансен В. юлташ командир пулса ертсе пыракан пӗрлешнӗ отрячӗсем икӗ кун хушшинчи ҫапӑҫусенче 500 ҫити гитлеровеца вӗлерсе пӗтернӗ, нимӗҫсен 8 танкӗпе бронемашинине ҫӗмӗрнӗ тата ҫунтарса янӑ.

* * *

Нимӗҫсен 340-мӗш пехотнӑй дивизийӗн 695-мӗш полкӗнчен тыткӑна лекнӗ обер-ефрейтор Вальтер Губер ҫапла каласа панӑ: «340-мӗш дивизи Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрҫӑ фронтне 1942 ҫулти июльре килсе ҫитнӗ. Пирӗн полк йышӑннӑ яла малтанхи кун Хӗрлӗ Ҫар пӑрахса кайнӑ пулнӑ. Эпир яла пырса кӗнӗ чухне урамра нимӗҫсен 10 танкӗ ҫунса ларатчӗ. Пире оборона йышӑнма тата вырӑссене кирек-мӗнле пулсан та чарса тӑма приказ пачӗҫ. Анчах та вырӑссен танкӗсем пачах урӑх енчен шӑтарса кӗчӗҫ. Салтаксем хӑраса ӳксе каялла тарма тытӑнчӗҫ. Рота командирӗ пуринчен малтан тарчӗ. Обер-фельдфебель Штейдель таракан салтаксене чарас тесе, вӗсем ҫине автоматран пеме тытӑнчӗ. Эпӗ сӑртран чупса аннӑ ҫӗре унта вырӑссем ҫитнӗччӗ, эпӗ вара хирӗҫ тӑмасӑрах парӑнтӑм. Ҫав ҫапӑҫура эпир пысӑк ҫухатусем тӳсрӗмӗр, мӗншӗн тесен пӗтӗм полк вырӑссен пехотипе танкӗсем ҫавӑрса илнӗччӗ».

* * *

Нимӗҫсен фашистла захватчикӗсем оккупациленӗ совет районӗсенче пурӑнакан ҫынсене нимӗнле правӑсӑр чурасем туса хураҫҫӗ. Ленинград облаҫӗнчи «Искра» совхоза гитлеровецсем нимӗҫсен «кӑтартуллӑ хуҫалӑхӗ» тесе ят панӑ та, ӑна Шауэр баронӑн аллине панӑ. Ҫывӑхри ялсенчи хресченсене оккупантсем бароншӑн талӑкне 15—16-шар сехет ӗҫлеттереҫҫӗ. Каторгӑри ӗҫшӗн нимӗҫсем хресченсене нимӗн те тӳлемеҫҫӗ. Вӗсене кунне 300-шер грамм сӗлӗ ҫӑнӑхӗ кӑна параҫҫӗ. Нумаях пулмасть гитлеровецсем мӗнпур хресченсене совхоза хӑваласа пухнӑ та тӗп усадьбӑра 11 хӗрарӑмпа хӗрачасене халӑх умӗнче хӗненӗ. 55 ҫулти колхозницӑна Елена Федоровна Кузьминана палачсем виличченех хӗненӗ.

* * *

Норвеги партизанӗсен отрячӗ, Нарвик районӗнче кӗрешекенскер, юлашки кунсенче нимӗҫсен патрулӗсем ҫине темиҫе хутчен хӑюллӑн пыра-пыра тапӑннӑ. Партизансем 30 гитлеровеца вӗлерсе пӗтернӗ, 18 автомат тата патронсем нумай тытса илнӗ. Нарвикпа Эльвенес хушшинчи ҫул ҫинче нимӗҫсен боеприпассем турттарса пыракан 3 грузовикӗ минӑсем ҫине пырса кӗрсе сирпӗнсе кайнӑ.

* * *

Таджик ССР-чи ӗҫҫыннисем Ленинграда хӳтӗлекенсем патне парнесем нумай пухса янӑ. Фронта, боецсемпе командирсем тата политработниксем патне, ҫӑнӑх, рис, аш, типӗтнӗ ҫырла-ҫимӗҫсем, ашпа пахча-ҫимӗҫ консервисем пӗтӗмпе 50 вагон ҫитернӗ.

Августӑн 14-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Августӑн 14-мӗш ҫӗрне тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем противника хирӗҫ **Клетская** районӗнче, **Котельниковӑран** ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехри вырӑнта, ҫавӑн пекех тата **Минеральные Воды, Черкесск, Майкоп, Краснодар** районӗсенче ҫапӑҫнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче нимӗнле улшӑнусем те пулман.

* * *

Клетскаяран кӑнтӑрарахри районра пирӗн войскӑсем оборонӑллӑ ҫапӑҫусем туса пынӑ. Хушӑри рубежра ҫирӗпленсе ларса, пирӗн стрелковӑй часть, артиллерипе танксем пулӑшса тӑнипе, противникӑн темиҫе атакине сирсе пӑрахнӑ тата нимӗҫсен икӗ ротине ҫити, 7 танкне, 11 орудине, 17 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Котельниковӑран ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехри районра вӑйлӑ ҫапӑҫусем пынӑ. Участоксенчен пӗринче пирӗн артиллерирен персе нимӗҫсен 100 ҫити танкне, 35 бронемашинине, 350 автомашинине тата противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 600 ҫынна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Халӑх пурӑнакан пункт патӗнче совет танкисчӗсемпе, пехотинецӗсем гитлеровецсене атакӑланӑ. Куликов сержантӑн йывӑр танкӗн экипажӗ тӑшманӑн икӗ танкеткине ҫӗмӗрнӗ, противотанковӑй орудие таптаса лапчӑтнӑ тата 4 землянкӑна аркатнӑ. Йывӑр танкӑн командирӗ Гудков лейтенант нимӗҫсен йывӑр тата вӑтам танкӗсене, пӗр танкеткине тата 40 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ. Станковӑй пулеметӑн наводчикӗ Бойченко юлташ тӗл персе нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 200 ҫынна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Краснодар районӗнче пирӗн войскӑсем оборонӑллӑ хӗрӳллӗ ҫапӑҫусем туса пынӑ. Участоксенчен пӗринче неприятелӗн танкӗсемпе пехотин пысӑк вӑйӗсем, пирӗн оборонӑн пӗрремӗш линине татса, шалалла савӑлланса кӗме тата хӑйсен ҫитӗнӗвне малалла аталантарса пыма хӑтланнӑ. Вӑйлӑ ҫапӑҫусем хыҫҫӑн гитлеровецсене чарса лартнӑ, унтан малтанхи позицисем патне сирсе ывӑтнӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн 300 ытла вилли выртса юлнӑ. Тепӗр участокра пирӗн чаҫсем, противникӑн йышлӑрах вӑйӗсем хӗснипе, оборонӑн ҫӗнӗ рубежне патне чакнӑ.

* * *

Воронеж районӗнче Зыков юлташ командир пулса тӑракан чаҫри боецсем

Вӗҫӗ 2-мӗш страницӑра

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 14-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

нимĕçсен 650 салтакпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Артиллеристсем тата минометчиксем, противникăн пехотине 3 ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Воронежран кăнтăрарахри вырăнта, пирĕн чаçсем хĕвеланăç сыранĕнче, пирĕн чаçсем противникăн темиçе атакине сирсе-сире тăраççĕ, хăйсем йышăннă [illegible] пытарса тăнă.

* * *

Сурĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн чаçсем икĕ кун хушшинче çапăçусенче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсен 3.000 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Александр Носов командир пулса тăракан подразделенири летчиксем нимĕçсен 20 транспортнăй самолетне аркатнă. Çав самолетсене «Мессершмитт-109» йышши 4 самолет хуралласа пынă. Пирĕн летчиксем гитлеровецсен стройне çĕмĕрсе кĕнĕ те çывăхри çапăçусенче нимĕçсен 6 самолетне персе ÿкернĕ. Булави тата Шпейнинцкий юлташсем командирсем пулса тăракан зенитнăй артиллери орудийĕ расчечĕсем «Юнкерс-52» йышши 9 транспортнăй самолета персе антарнă.

* * *

Партизансем С. юлташ командир пулса тăракан отрячĕ, Смоленск облаçĕнче кĕрешекенскер, виçĕ эрне хушшинче çапăçусенче 230 оккупанта пĕтерсе тăкнă, 18 грузовик тата çăмăл машина пĕтерсе тăкнă. Халăх пурăнакан пунктсенчен пĕринче партизансем гитлеровецсен 2 пулемет [illegible] тата продовольстви склачĕ тытса илнĕ.

* * *

Ахларавра вĕлернĕ 45-мĕш пехот. полкĕн 2-мĕш ротинчи салтакĕн Франц Больдмайерăн запискинче [illegible] пичетленĕ: «Дубовичи патĕнче партизансем пирĕн колонна çине печĕç. Çак [illegible] яна.

Чăваш республикинчи промысла артелĕсен июль уйăхĕнчи социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсем

Комисси Чăваш республикинчи промысла артелĕсен 1942 çулта июль уйăхĕнчи социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене тунă.

Комисси çакна палăртрĕ: республикăри промысла артелĕсем июль уйăхĕнчи производство программине 12 артель çеç тултарнă: Чăвашпромсоюз енĕпе — Канашри «Авангард» артель, Шупашкарти «Культура» тата «Кооператор» артелĕсем; Швейпромсоюз енĕпе — Караньял (Октябрьски район) «Труд» артель, Çĕрпÿри профшкул тата Карачри (Куславкка р.) Клара Цеткин ячĕпе тăракан артель; Тарпромсоюз енĕпе — Апакассинчи (Çĕрпÿ р.), Энĕшпассинчи (Красноармейски р.), Çĕньял Уйкасри (Шупашкар р.) тата Ямашри (Шăхасан р.) артельсем; Древпромсоюз енĕпе — Етĕрнери тата Чăваш Сăкăтри (Чкаловски р.) Киров ячĕпе тăракан артельсем тултарнă.

Комисси промкооперацин РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи управленийĕн Чăваш АССР тăрăх ĕçлекен уполномоченнăйĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Канашри «Авангард» артельрен илсе, Караньялĕнчи «Труд» артеле пама тата ăна «Чăваш АССР-ĕн чи лайăх артель» ятне пама йышăннă. «Труд» артель июльри производство программине 237 процент тултарнă, планран ирттерсе 94.300 тенкĕлĕх продукци панă.

Ăмăртури иккĕмĕш вырăна Энĕшпассинчи артель йышăннă. Вăл уйăхри производство планне 550 процент тултарнă, планран ирттерсе 27.943 тенкĕлĕх продукци панă. Артель васкавлă заказсене те лайăх пурнăçласа пырать.

Виççĕмĕш, тăваттăмĕш, пиллĕкмĕш вырăнсене Çĕрпÿри профшкул, Канашри «Авангард», Шупашкарти «Культура» артельсем йышăннă, юлашки вырăнсене Апакассинчи, Çĕньял Уйкасри, Етĕрнери, Чăваш Сăкăтри артельсем, Карачри Клара Цеткин ячĕпе тăракан артель, Шупашкарти «Кооператор» артель тата Ямаш артелĕ йышăннă.

Комисси çÿлте асăннă союзсем хăйсен системисене кĕрекен артельсен социализмлă ăмăртăвне çителĕксĕр ертсе пынине уйрăмах палăртнă. Çавăн пирки плана ăнăçлăн тултарса ĕçлекен артельсен хисепĕ питех те сахал, ăмăртăва хутшăнман тата начар ĕçлекен артельсен хисепĕ ытларах. Комисси август уйăхĕнче промартельсен социализмлă ăмăртăвĕн массăллă тĕрĕслевне ирттерме йышăннă.

Декадăри задание ирттерсе тултарчĕ

Шупашкарти пир-авăр тĕртекен фабрика (директорĕ Ерышев юлташ) август уйăхĕн малтанхи вунăкунлăхĕнчи задание 116 процент тултарчĕ. Фабрикăри отделсенчен плетельнăй отдел малта пырать.

Коллектив пысăк хастарлăхпа ĕçлет. Арлакан Пугачевская, тĕртекенсем Андреева, Кунстманис юлташсем нормăна ытлашшипех тултараççĕ, Сорокина, Баврина работницăсем икшер станокпа ĕçлеççĕ.

Я. РОХЛИН.
Фабрикăн главнăй инженерĕ.

МАШИНИСТ МОЛЕВ

Молев юлташ Ленинград облаçĕнчен куçса килнĕ. Унта вăл слесарь пулса ĕçленĕ. Буинскри вăрман заводне вырнаçсан та малтанах слесарь пулса ĕçлет. Курать: заводра специалистсем çитмеççĕ, машинист кирлĕ. Молев юлташ машинист ĕçне вĕренме тытăнать, часах машинист помощникĕ пулса тăрать. Машинистăн хăйĕн çав вăхăтрах фронта кайма тивет. Помощник унăн ĕçне туса пыма тытăнать. Пултаруллă работник ĕçе хăвăрт хăнăхать, çав вăхăтрах хăйĕнпе пĕрле ĕçлеме пĕр машинист вĕрентсе хатĕрлет. Унтан слесарь, тимĕрçĕ тата икĕ кочегар вĕрентсе кăларать. Халĕ Молев юлташ çак работниксемпе машина отделĕн ĕçне пĕр чăрмавсăр туса пырать. Унăн ĕçĕнчен завод ĕçĕн ăнăçлăхĕ килет.

И. РУБЦОВ.

Чугунçул валли вутă хатĕрленĕ çĕрте

ИЕПРЕÇ, августăн 14-мĕш. (**Телефонпа.**) Вăрманта ĕçлекенсем пĕр-пĕринпе социализмлă ăмăртăва тухнă хыççăн, чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес ĕç вăйлансах пырать. Вутă турттаракансем хăйсен заданийĕсене вăтамран 200 процент тултараççĕ. «Молния» колхоз членĕсем Нарядкинпа Скутон юлташсем 7-шер кубометр турттарса, заданирен виçĕ хута яхăн тухăçлăрах ĕçлеççĕ. «Красный металлист» колхозран пынă Рыжиковпа Афанасьев юлташсем те куллен 5—6-шар кубометр турттараççĕ.

Касакансен ĕç тухăçлăхĕ те ÿссех пырать. Партин 17-мĕш съезчĕ ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Ашанинпа Чураков юлташсем ăмăртăва хутшăначчен 3—4 кубометр касатчĕç, халĕ 7—8 кубометр касаççĕ, нормăна 350—400 процент тултараççĕ.

Вăрман ĕçĕнчи стахановецсен речĕ кунран-кун ÿссе пырать.

Д. МИХАЙЛОВ.

„Ĕç нормисене 200—300 процент тултарма тăрăшăр"

Фронтран килнĕ çырусенчен

Пирĕн земляксем нумайăшĕсем отечественнăй вăрçă фрончĕсенче тăшмана хирĕç çапăçаççĕ. Вĕсем тылра ĕçлекенсемпе тачă çыхăну тытма тăрăшаççĕ.

Çĕрпÿ районĕнчи Лĕпсер ялсоветĕнчи Çĕнъялтан Хĕрлĕ Çара кайнă Василий Ефимов, халĕ гвардейски чаçра противотанковăй пăшалсен взвочĕн боецĕ пулса фронтра çапăçаканскер, пирĕн хаçат редакцине акă мĕн çырать:

«Хисеплĕ юлташсем! Эсир пĕлетĕр: тыл мĕн чухлĕ çирĕп, вăл фронтшăн çавăн чухлĕ шанчăклăрах. Çавна шута илсе, эсир заводра тата колхозра вăя шеллемесĕр ĕçлĕр, ĕç нормисене 200—300-шер процент тултарма тăрăшăр, фронта пулăшăр».

М. В. Ярухин комиссар пулса тăракан подразделенири боецсем, Чăваш республикинчен кайнăскерсем, фронтран çапла çыраççĕ:

«Эпир тăшмана татах та вăйлăрах çапăпăр, фрицсене татах та нумайрах пĕтерсе пырăпăр. Тăшмансене пуçĕпе аркатса тăкаччен, юлашки юн тумламĕ юлмиччен Тăван çĕршывшăн çапăçма сăмах паратпăр. Пирĕн чĕре тапнă чухне тăшмансене хĕрхенсе тăмăпăр».

Вĕсем пире уборкăна ăнăçлăн вĕçлессишĕн хĕрсе ĕçлеме чĕнеççĕ. Тăрăшса ĕçлени — нимĕç оккупанчĕсене пĕтĕмпех аркатса тăкма фронта пысăк пулăшу пани пулать, теççĕ вĕсем.

Хура тинĕс хĕрринче фашистсене хирĕç çапăçакан краснофлотец С. Кружков редакцине акă çырура вĕçет: Севастополе мĕнле хÿтĕлени çинчен, унта çапăçусем çинчен каласа парать. Краснофлотецсем халĕ те тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçни çинчен çырать:

«Тăшман Кавказ çине урнă йытă пек, тискер кайăк пек тапăнать. Тăшман пĕлет, унта ăна кирлĕ бензин, нефть, тырă, выльăх-чĕрлĕх, пахча-çимĕç нумай. Тăшман Кавказа нихăçан та илеймĕ. Хура тинĕс флочĕ сывлăшри тата çĕр çинчи çарсемпе тачă çыхăну тытса тăшмана çапса аркатĕ. Эпир фронтра тăшмана вăйлăн çапатпăр. Тăван çĕршывшăн, Сталин юлташшăн юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçатпăр, кирлĕ пулсан пуçа та хурăпăр.

Тăшмансене аркатса тăкас вăхăта çывхартма тылра тăрăшса ĕçлĕр. Тырпула, пахча-çимĕçсене вăхăтра пухса кĕртсе, фронта ытларах апат-çимĕç, аш-какай, сĕт-çу парса тăрăр. Çавăнпа эсир тăшмана хирĕç çапăçма, тăшмана аркатса тăкма пирĕн Хĕрлĕ Çара пулăшăр.

Тăшман инçетри тыла шпионсем яма пултарать. Юлташсем—колхозниксемпе колхозницăсем, учительсемпе учительницăсем, кашни утăмрах сыхăлăхлă пулăр, тăшман агенчĕсене тытма совет влаçĕн органĕсене пулăшăр!»

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Уборкăри агитациллĕ ĕçĕн опычĕ

Колхозниксемпе колхозницăсем тырпулсене пухса кĕртес тĕлĕшпе кунĕн-çĕрĕн ĕçлеççĕ. Вĕсем хушшинче агитаторсем политикăллă-массăллă ĕçе туса пыраççĕ. ВКП(б) Елчĕк райкомĕ уборка вăхăтĕнче агитаци ĕçне туса пыма коммунистсемпе комсомолецсене, ялти активa хутшăнтарчĕ. Районри колхозсенче пĕтĕмпе 388 агитатор. Вĕсен йышĕнче: коммунистсем—44, комсомолецсем—204, партире тăман активистсем—140 çын. Ялти учительсем 159 çын, колхозниксем 240 çын агитаторсем пулса ĕçлеççĕ, 245 агитатор уйхирти ĕçсене тунă çĕрте хăйсем те ĕçлеççĕ. Район центрĕнчи активран 20 çын колхозсене пулăшаççĕ.

Колхоз производствинче тăрăшса ĕçленипе пĕрлех, агитаторсем колхозниксем хушшинче политинформацисем, калаçусем ирттереççĕ, хаçатсем вуласа параççĕ, стена хаçачĕсем кăлараççĕ, социализмлă ăмăртăва организацилесе пыраççĕ. Августăн 1-мĕшĕнчен вара агитаторсем 2.356 алаçу ирттернĕ, 2.486 хутчен хаçат вуласа панă. Районри колхозсен 188 бригади социализмла ăмăртса ĕçлет. Ăмăрту итогĕсене колхозсенче пуринче те пекех кашни кун пăхса тухаççĕ. 13 колхозра лайăх ĕçлекен бригадăсене е звеносене пама куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавсем тунă. Августăн 1—12-мĕшсенче 49 колхозра 93 номер хаçат тухнă, бригадăсенче 333 номер кăларнă. Çав хаçатсенче лайăх ĕçлекен колхозниксен ĕçри опычĕсене сутатса пыраççĕ, начар ĕçлекенсене критикăлаççĕ. Районри 54 колхозран 41 колхозĕнче ача яслисем уçнă, 53 колхозра пĕрле апатланас ĕçе организациленĕ.

Массăсем хушшинчи агитациллĕ ĕçе уйрăмах «Марс» колхозра лайăх туса пыраççĕ. Аслă Елчĕкри Ленин ячĕпе тăракан колхозри пуçламĕш парторганизаци те политикăллă ĕçе лайăх йĕркелесе янă. Унта коммунистсене колхозри ответлă участоксене вырнаçтарса тухнă. Кашни бригадăрах тата кашни звенорах агитатор пур. Агитаторсем 187 хутчен калаçу ирттернĕ, 150 хутчен хаçат вуласа панă, 10 бригадăра 23 номер стена хаçачĕ кăларнă. Колхоз бригадисем пĕр-пĕринпе социализмла ăмăртса ĕçлеççĕ, ăмăрту мĕнле пыни çинчен показательсен хăми çине çырса пыраççĕ. Кунта колхозăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне тунă, ăна социализмлă ăмăртура малта пыракан иккĕмĕш бригада илнĕ.

Районри хăшпĕр колхозсенче агитациллĕ ĕç çителĕксĕр пулса пырать, агитаторсем уйхирте ĕçлемеççĕ. Сăмахран, «Новая волна» колхозри 12 агитатортан иккĕшĕ çеç тырă вырма хутшăннă. Унта стена хаçачĕсем тухмаççĕ. Çавăн пекех «Новый путь» тата «Коммунист» колхозсенче те агитациллĕ ĕçе начар йĕркеленĕ. Çак колхозсем вара уборкăра та юлса пыраççĕ.

А. РОМАНОВ.
ВКП(б) Елчĕк райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующийĕ.

Ют çĕршывсенче

Оккупациленĕ çĕршывсен морякĕсем нимĕçсене хирĕç кĕрешеççĕ

ЛОНДОН, августăн 13-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Германи оккупациленĕ çĕршывсенчен тарса тухнă морякĕсенчен 200 ытла боевой карапăн командисене пулса йĕркеленĕ. Çав морякĕсем çавăн пекех Голландии, Франции, Норвегии, Польшăн, Греции, Бельги суту-илÿ судисем çинче те ĕçлеççĕ.

Ирĕклĕ Голландии флотĕнче 60 боевой карап, вĕсен хушшинче крейсерсем, эсминецсем, подводнăй лодкăсем, конвойнăй судисемпе минăй тральщиксем пур.

Кĕрешекен Франци флотĕнче 49 карап, вĕсен шутĕнче 3 эсминец тата 7 корвет; çав судисен командисенче 6.100 çын тăрать.

Ирĕклĕ Норвеги флотĕнче 59 карап, вĕсем çинче 4.200 моряк ĕçлет. Кунсăр пуçне, 850 норвежец конвой службине [illegible] çар ĕçне вĕренеççĕ.

Польша правительстви нимĕçсенчен 9 карап çăлса хăварма пултарнă.

Бельги правительстви аллинче 7 карап, вĕсем Англи королевстви флотĕн составне кĕреççĕ.

Францири çивĕч лару-тăру

ЛОНДОН, августăн 13-мĕш. (ТАСС). Швецин «Свенска тагбладет» хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, Францинче государственнăй переворот пулассиш çинчен хыпар сарăлнă пирки Лаваль войскисене Виши правительствине сыхлама чĕнсе каланă.

«Дейли мейл» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Лавале Дорнопа Деа [illegible] Германи майлă тăракан çын пулса çитмен-ха. Лаваль пĕр енчен [illegible].

«Дейли мейл» хаçатăн çамахĕсем тăрăх, оккупациленĕ Францин нумай районĕсенче демонстрацисемпе палхавсене тата полиципе пулса иртекен тытăçусен çĕнĕ хумĕ çĕкленнĕ.

Парижри радиостанци пĕлтернĕ тăрăх, Парижра тата ытти вырăнсенче Германи салтакĕсемпе офицерĕсем çине тапăнасси час-часах пула пуçланă. Франци патриочĕсем тупăсем те тытаççĕ тата ручной гранатăсемпе усă кураççĕ.

Парижри хĕçпăшаллă тытăçусем

НЬЮ-ЙОРК, августăн 13-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Франци патриочĕсем çак кунсенче Германи летчикĕсен Париж стадионĕсенчен пĕринче çар ĕçне вĕренекен 60 çынлă ушкăнĕ çине тапăннă. Вĕсем çине ручной гранатăсем пăрахнă. Икĕ летчика вĕлернĕ, 18 çынна амантнă. Франци патриочĕсем тарса пытаннă. Полиципе гестапо агенчĕсем пĕтĕм района çавăрса илнĕ пулнă, анчах никама та тытса чараймăн. Çынсене массăллăн арестлесе пĕтернĕ.

ЖЕНЕВА, августăн 13-мĕш. (ТАСС). Нимĕçсене хирĕç тăрасси Францире хаярланнăçемĕн хаярлансах пырать. Çĕршывăн чылай районĕсенче Германие хирĕçле массăллă выступленисем пулса иртеççĕ. Ĕнер Парижра Абукир урамĕнче патриотсемпе полици тата пулеметсемпе хĕçпăшалланнă войскăсем хушшинче чăн-чăн çапăçу пулса иртнĕ. Парижансем гранатăсемпе револьверсене тата пăшалсене ĕçе янă.

Германие хирĕçле демонстрацисем çавăн пекех тата Марсельре, Лионра тата Францин ытти хулисенче те пулса иртнĕ.

Югослави партизанĕсен паттăр кĕрешĕвĕ

ЖЕНЕВА, августăн 11-мĕш. (ТАСС). Партизансем Югославире поражени тÿсни çинчен Германире темĕнле çуйăхса пĕлтернине пăхмасăрах, Серби патриочĕсен çарĕсем хăйсен Боснипе Хорватири позицийĕсене ăнăçлăн тытса тăраççĕ кăна мар, вĕсем Германипе Итали войскисене, усташсемпе пĕрле пулса операцисем тăваканскерсене, кашни кун тенĕ пекех йывăр çухатусем кÿреççĕ. Противникăн йышлă вăйĕсене хирĕç Боснин сăрт-ту районĕсенче уйрăмах йывăр çапăçусем пыни çинчен пĕлтереççĕ. Кунта халăх пурăнакан чылай пунктсенчен нимĕçсемпе итальянецсен гарнизонĕсене хĕсе-хĕсе кăларнă. «Дейли мейл» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсемпе итальянецсен Боснире юлашки икĕ уйăх хушшинче 18.000 салтакпа офицер пĕтнĕ. Çавăн пекех Хорватин çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнче те хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Çав хаçатах çапла пĕлтерет: çак кунсенче партизансем Загребран Италие чикки патне каякан чугунçула чылай вырăнсенче аркатнă, çав çул тăрăх çÿресси пĕтĕ йывăрланса çитнĕ. Далмацире партизансем «Майдан» фабрикин икĕ складне вут тивертнĕ. Пушарпа 200 пичке бензин, 40 пичке сĕрмелли çусем тата ытти тĕрлĕ таварсем, пĕтĕмĕшпе 5 миллион динарлăх, пĕтнĕ. Нумаях пулмасть партизансем Любляньнари тĕрме çине тапăннă, тĕрмерен 6 пин çынна яхăн ирĕке кăларнă.

АМСТЕРДАМРИ ЗАБАСТОВКА

ЛОНДОН, августăн 7-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Амстердамри заводсенчен пĕринчи рабочисем, вĕсен юлташĕсене Германие ăсатнине хирĕç протестлесе, забастовка пуçласа янă. Забастовка пуçланнă хыççăн пĕр сехет иртсен, гитлеровецсем рабочисене завода каялла тавăрнă.

Краковра гестапо начальникне вĕлернĕ

ЛОНДОН, августăн 13-мĕш. (ТАСС). Кунта илнĕ хыпарсем тăрăх Польша патриочĕсем Краков хулинчи гестапо начальникне Гасслер полковника вĕлернĕ.

Карпат лешъенчи Украинăри партизанла вăрçă

ЛОНДОН, августăн 13-мĕш. (ТАСС). Информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Карпат лешъенчи Украинăри халăх Венгри оккупанчĕсене хирĕç геройла кĕрешет. Партизансен отрячĕсенчен пĕри, Венгрин механизациленĕ войскисен колонни çине кĕтмен çĕртен пырса тапăнса, 100 салтак ытла пĕтерсе тăкнă. Партизансем автоматла хĕçпăшалсем нумай тытса илнĕ. Çав отрядах нумаях пулмасть темиçе çĕр салтака пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне тата фронталла çар снаряженийĕ турттарса каякан поезда сирпĕнтерсе янă. Тепĕр отряд икĕ тытăçура венгерсен 105 салтакне вĕлерсе пĕтернĕ, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă тата венгерсен продовольстви турттарса каякан обозне тытса илнĕ. Продовольствие выçă аптăракан халăха çийĕнчех валеçсе панă.

Гитлерла çынçиенсен тискер приказĕ

ЛОНДОН, августăн 13-мĕш. (ТАСС). Информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Лондонра Германи верховнăй командованийĕн приказĕн копине илнĕ. Ана Бельгире тăракан оккупациллĕ чаççенчен пĕринчи офицертан тытса илнĕ пулнă.

Каялла чакмалла пулсан, противника мĕн усă кÿме пултарать, çавсене пурне те (шкулсене, учреждениcене тата ыттисене те) пĕтерсе тăкма хушнă çав приказра. Германи войскисене хирĕçле выступленисем пулса иртекен хуласене пурне те çунтарса яма, çав хулари паллă деятельсемпе çар çыннисене судпа следствисĕрех пере-пере пăрахма сĕннĕ.

Приказра çакна палăртнă: каялла чакнă чухне колоннăсемпе пымалла, партизансен отрячĕсем пырса тапăнниччен сыхланас е парашютистсем тылран пырса тапăннинчен сыхланас шутпа, çав колоннăсен пуçне мирлĕ халăха тăратмалла. Арьергардри чаççем чакнă хыççăн пур япаласене те пĕтерсе тăкмалла.

Нуман Менеменджиоглуна Турцин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулма уйăрса лартнă

АНКАРА, августăн 13-мĕш. (ТАСС). Анатоли телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Турцин ютçĕршыв ĕçĕсен министерствин генеральнăй секретарьне Нуман Менеменджиоглуна, нумаях пулмасть Стамбулран меджлис депутатне суйланăскере, ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулма уйăрса лартнă.

АМЕРИКА ЛЕТЧИКĔСЕМ-ИСТРЕБИТЕЛЬСЕМ ЕГИПЕТА ПЫНА

НЬЮ-ЙОРК, августăн 13-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Египета Америка летчикĕсем истребительсем пынă.

Индири лару-тăру

НЬЮ-ЙОРК, августăн 13-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Варда, Лакнау, Дели, Пуна, Насик, Канпура тата Мадрас хулисенче полиципе конгрессистсем хушшинче каллех тытăçусем пулса иртнĕ.

Лакнау хулинче çĕçĕсем тытнă çынсен ушкăнĕ арестленĕ çынна илсе пыракан полицейскисем çине тапăннă та арестленĕ çынна ирĕке кăларнă.

ЛОНДОН, августăн 13-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Алахабадра çынсен пысăк ушкăнĕ полици отрячĕ çине кирпĕчсемпе пеме тытăннă. Каярахпа демонстрантсем полици участокĕ çине тапăннă, анчах та вĕсене полици хăваласа янă. ПВО службин тĕп çурчĕ патне кĕрсе кайса, çынсен ушкăнĕ мĕнпур оборудование, çав шутрах васкавлă пулăшу машинине те, çунтарса янă. Çавăн пекех тата полици участокĕсен темиçе çуртне вут тивертсе янă. Бомбейра лару-тăру чылаях лайăхланнă. Полиципе войскăсем, хулара патрульре çÿреççĕ. Августăн 7-мĕшĕ хыççăн паян чи пирвайхи хут трамвайсем çÿреме тытăннă. Магазинсемпе рыноксем уçăлнă. Хулан фабрикăсем вырнаçнă районĕсенче лăпкă. Заводсем, фабрикăсем тата мастерскойсем ĕçлеме тытăннă.

Англин Инди тĕлĕшпе ĕçлекен министерстви пĕлтернĕ тăрăх, çĕршыври пăлханусене татăклăнах пусарса лартнă.

Министерство пĕлтернинче çакна паллă тунă: Индин ялсенче районĕсенче нимĕнле событисем те пулса иртмен. Индин çар промышленноçĕн нумайрах пайĕ вырнаçса тăракан Калькутта хулинче те Индин национальнăй конгресĕн лидерĕсене арестлени пирки нимĕнле пăлхану тавраш̆ĕ те пулман.

ИСПАНИН РЕСПУБЛИКАНЕЦĔСЕНЕ ГИТЛЕРОВЕЦСЕН АЛЛИНЕ ТЫТСА ПАНИНЕ ХИРĔÇ ПРОТЕСТЛЕНИ

ЛОНДОН, августăн 5-мĕш. (ТАСС). «Манчестер Гардиен» хаçат Англин паллă обществăллă деятелĕсем нумайăшĕсем алă пуснă çырăва пичетлесе кăларнă. Çырура Испанин 100.000 республиканецне, хăйсен вăхăтĕнче Францире хÿтлĕх тупнăскерсене, Лаваль Германие ирĕксĕр ĕçе ăсатма шутлани çинчен каланă. Республиканецсем ирĕксĕр ĕçе хăйсен ирĕкĕпе кайма килĕшмесен, Лаваль вĕсене Франко аллине тытса парассипе хăратать. Çырăвăн авторĕсем тĕнчери цивилизациллĕ халăхсене Лавалĕн преступлениллĕ планне хирĕç протестлеме чĕнеççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧУВАШСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ ПЕДАГОГИЧЕСКИЙ ИНСТИТУТ
Наркомпроса РСФСР в г. Мариинском Посаде
продолжает прием заявлений на I курсы всех факультетов Педагогического и Учительского Институтов.

Педагогический институт имеет 4 факультета: истории, языка и литературы (с отделениями русского языка и литературы и чувашского и русского языка и литературы); физики и математики (с отделениями физики и математики) и естествознания.

Институт подготовляет преподавателей для работы в техникумах и 8—10 классах средних школ.

Срок обучения 4 года.

Учащиеся, окончившие средние школы в 1941 и 1942 г. г., а также лица, демобилизованные из Красной Армии, принимаются без испытаний.

Учительский институт имеет 5 отделений: истории; русского языка и литературы; чувашского и русского языка и литературы; физики и математики; естествознания и географии.

Институт подготовляет преподавателей для работы в 5—7 классах средних и неполных средних школ.

Срок обучения — 2 года.

В Учительский институт принимаются без испытаний окончившие в 1941 и 1942 г. г. 10 и 9 классы средних школ (за исключением естественно-географического отделения, где состоится конкурс лицам, окончившим 10 и 9 классы не на «отлично» и «хорошо»).

Прием заявлений в Педагогический и Учительский Институты продолжается до 1 сентября.

Приемные испытания (для лиц, поступающих с испытаниями) состоятся с 15 по 25 августа.

С 17 августа открываются подготовительные курсы.

Правила приема и программы испытаний можно получить из ин-та, выслав марок на один рубль, или во всех районных отделах Народного образования.

Все студенты обеспечиваются местом в общежитии, питанием в столовой и продовольственными и промтоварными карточками, а имеющие аттестат отличника или 2/3 отличных оценок за последний класс (9 или 10), а также участники отечественной войны, вернувшиеся в ин-т из Красной Армии и Военно-Морского флота после ранений, контузий, увечья или болезней, зачисляются на государственную стипендию. Институт имеет свое подсобное хозяйство.

От платы за обучение освобождаются нуждающиеся из числа стипендиатов, а также лица, возвратившиеся из Красной Армии и Военно-Морского флота после ранения, контузии, увечья или болезни и иждивенцы рядового и младшего начсостава, призванного в ряды Красной Армии и Военно-Морского флота, получающих пособие согласно Указу Президиума Верховного Совета от 26 июня 1941 года.

Нуждающиеся из числа студентов, могут совмещать учебу с работой на предприятиях, учреждениях с 4—6 часовым рабочим днем. Дирекция оказывает таким студентам помощь в подыскании работы.

Заявления с документами направлять по адресу: г. Мариинский Посад, Педагогический Институт, дирекции.

ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1347 Типография №1 Управлении полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.